# Колхозăн ăста хĕрĕсем

**(Курни-илтни, çĕнĕ шухăшсем)**

**Нумаях пулмасть район администрацийĕ çумĕнчи çамрăксемпе ĕçлекен пай выльăх-чĕрлĕх пăхакан çамрăк хĕрарăмсемпе тĕлпулу ирттерчĕ.**

Пирĕн ытарайми хĕрарăмсем ăçта тата кам пулсан та, вĕсем яланах хĕрарăмсем, çавăнпа та вĕсем хĕрарăмăн ыркăмăллăхĕ, çепĕçлĕхĕ, тăрăшулăхĕ, чăтăмлăхĕ тата ытти пахалăхĕсем кирлĕ отрасльсенче вăй хураççĕ. Ял хуçалăхĕнчи йывăр отрасльсенче, сăмахран, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ, сахăр кăшманĕ акса ÿстернĕ çĕрте, тĕпрен илсен, хĕрарăмсем ĕçленинчен тĕлĕнмелли çук. Çамрăк çынсенчен чылайăшĕ хулана кайнă е коммерци ĕçĕпе пурăнас тенĕ чухне ыттисем вара нумайăшĕ агропромышленность комплексĕн чи яваплă участокĕсенче вăй хураççĕ, апла пулсан ыранхи куна шанма пулать.

Тĕлпулăва районти тĕрлĕ ялсенчи доярккăсемпе сысна пăхакансем пуçтарăнчĕç. Кашнин çемье, çурт, хуçалăх, ачисем. Вĕсенчен кашни - хăйĕн ĕç вырăнĕнче шанчăклă ĕçчен тата коллектив мăнкăмăллăхĕ. Çак сăмахсене кашнин адресĕпе калама пулать: хресченсен хуçалăхĕсен "Çуткÿл" ассоциацийĕн доярки Фарида Давлетшина, "Рассвет" ассоциаци представительници Розалия Сингатуллина тата сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕнчи Мария Улякашкина, çаплах хресченсен хуçалăхĕсен "Родина" ассоциацийĕн доярки Мария Ипатова тата ыттисем çинчен. Вĕсен ĕç кунĕ ирхине ирех-тăвата сехетре пуçланать. Вĕсем канмалли кунсенче те, уявсенче те ĕçе чарма пултараймаççĕ, пурне те вăхăтлă пурнăçламалла. Выльăхсем те хăйсен хуçисене чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Хĕрсем хăйсен ушкăнĕсенчи ĕнесене кашнине ят панă, вĕсене уйрăмшарăн пăхма, ачашлама тăрăшаççĕ, хăйне лайăх пăхнине, унпа тимлĕ пулнине выльăх та ăнланать вĕт. Çавăнпа та кунта ĕçлекенсен чи малтан ыркăмăллăх, чăтăмлăх тата тăрăшулăх пахалăхĕсем кирлĕ. Çакăн çинчен хĕрсем хăйсем те калаççĕ: кусем РСУ хушма хуçалăхĕн доярки Майя Сордионова, хресченсен хуçалăхĕсен "Тан" ассоциацийĕн доярки Рашида Сунгатуллина, Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацире сысна пăхакан Любовь Миннебаева.

Хĕрарăмсен килĕнче те ĕç питĕ нумай, анчах вĕсем пурнăçран юласшăн мар: хаçат-журналсем вулаççĕ, телевизорпа кăтартакан интереслĕ передачăсем пăхаççĕ. Çаплах вĕсем астрологи прогнозĕсемпе паллашма та вăхăт тупаççĕ. Çемьере икĕ е виçĕ ача пулсан вара, ĕç тата та хушăнать, çапах та хĕрарăмсем хăйсен ачисемпе телейлĕ. Ялти ачасем аппĕ-амăшĕсене пĕчĕккĕллех пулăшма тытăнаççĕ вĕт. Çавăнпа та ялта пурăнакансем кашни ача хăйĕн телейлĕ çăлтăрĕ айĕнче çуралать теме юратаççĕ. Хăш-пĕр чухне вара ачисем ÿссе çитĕнсен, аппĕ-амăшĕн ĕçне малалла пурнăçлакансем пулса тăраççĕ. Сăмахран, çак тĕлпулу хăни, хресченсен хуçалăхĕсен "Алга" ассоциацийĕн доярки Гузалия Гарифуллина пĕчĕккĕллех амăшне пулăшма ферма çÿренĕ. Çитĕнсе çитсен вара хăй çак профессие суйласа илнĕ те халь вăл выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессинче малта пыракан ĕçчен шутланать.

Пирĕн илемлĕ те хастар хĕрарăмсен хăйсен юратнă юррисем тата артисчĕсем, чечекĕсем, кĕнекисем тата апатçимĕçĕсем пур. Вĕсенчен кашни ачасем чи пысăк пуянлăх тесе шутлать, хăшĕн-пĕрин вара çав вăхăтрах атте вырăнне те пулма тÿр килет, анчах та вĕсем хăйсен шăписемпе кăмăллă. Вĕсем пурнăçăн кашни саманчĕпе савăнса пурăнаççĕ, малашне тата та лайăхрах пурăнасса шанаççĕ тата хăйсем пурнăçăн чăн-чăн хуçисем пулнине пĕлеççĕ. Вĕсем кану кунĕсемсĕр, уявсемсĕр ĕçлеççĕ пулин те, чунчĕрисемпе пирĕнтен пуянрах. Эпир кăшт чирлесенех ĕçе тухмасса та пултаратпăр, вĕсен вара ун пек тума, чирлеме юрамасть, вĕсем чăннипех питĕ кирлĕ ĕçченсем. Кам та пулин урăххи, аякккинчен килнĕ çын ĕçлеме тытăнсан вара уйăхĕ-уйăхĕпе, çулталăкĕпе тунă ăнăçлăхсем пурте çухалаççĕ. Çавăнпа та, хисеплĕ ĕçченсем, эпир сире çирĕп сывлăх, сирĕн йывăр ĕçĕрте чăтăмлăх сунатпăр. Анчах та вĕсене ĕçре улăштаракансем кирлех. Ĕçе чун-чĕререн, тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлакансене кам ÿстерĕ? Акă вăл паянхи ыйту.

**К.ЯМАЛЕТДИНОВА.**

# Ĕненÿ символĕ

Пирĕн пурнăçра кашнин асаилÿсене таçта инçете пытарас килекен тĕлпулусем пулаççĕ пулĕ. Вĕсене ĕмĕрлĕхе манмалла пек. Анчах пачах урăхла та пулать. Ку вара камăн мĕнле.

Михаил Григорьевич Логинов çитмĕл иккĕре пырать. Вăл, тĕреклĕ те вăр-варскер, çÿçĕ шуралнă пулин те, кусĕсем çамрăк-ха, вичкĕн тата çутă. Çак çын ырă кăмăллă, таса шухăшлă та ăслă пулни тÿрех палăрать. Çакăн пек çынсене черетре те мала ирттерес е хăвăншăн питĕ кирлине ыйтса пĕлес килет.

Вăл калаçнă чухне те, ыттисем пек мар, чунчĕререн, ăшшăн калаçать. Ман шухăшпа, вăл чăннипех хисепе тивĕç. Ун патне вăл нумай çул хушши тÿрĕ те такăр çулпа, малашнехи ĕмĕтпе утнă. Михаил Григорьевич Турра çирĕп шанать. Мĕншĕн тесен хăйĕн пурнăçĕнче ăна тĕрлине тÿссе ирттерме тÿр килнĕ. Çак çулсем хушшинче вăл нимĕн те çухатман.

Офицер пулнă. Киевра тата Инçетри Хĕвелтухăçĕнче пурăннă. 25 çул - 1970 çултан тытăнса 1995 çулччен, çулла хăйĕн тăван ялне, Ялавăра килсе çÿренĕ. Çынсем ĕмĕрлĕхе канлĕх тупакан сăваплă вырăна вăл яланах хисепленĕ. Масар çине йывăççем лартнă, çĕрнĕ картана улăштарнă, кайран вара часавай туса лартнă та ăна çутатма Киевра пурăнакан Александр аттене илсе килнĕ. Вăл вăхăтра ун пеккине вăрттăн тунă - влаç ырламан... Часавайран хаклă икĕ çурта тыткăчи, кадило тата хатĕрлесе хунă ракатка хăмисем çухалсан, çынсем çавăн пек çăткăн та непĕссĕр пулни Михаил Григорьевича питĕ кÿрентернĕ. Çакăн пек киревсĕрлĕхе вара вăл виличчен те ăнланаймĕ. Вăрланă çыннăн çылăхне никам та, нихçан та каçармĕ.



Пурнăçĕ тăршшĕпех вăл çынсене пулăшать тата Турра кĕл тăвать. Унăн ытлашши укçа нихçан та пулман, пенси Украинăра илет, пысăк мар (кунта, Ялавăрта çурт илнĕ те халь çакăнта пурăнать).

Халь унăн пысăках мар утарĕ пур. Михаил Григорьевич хаçат-журналта кама та пулин пулăшу кирли çинчен вуласа пĕлсенех посылка пуçтарма тытăнать е укçа ярса парать. Ку вăл унăн опытсăрлăхĕ мар. Çук, вăл пурнăçа питĕ лайăх пĕлет. Çавăнпа та çынсене шеллет, ырă кăмăллă та хĕрхенÿллĕ пулма тăрăшать, чун таракатлăхĕпе палăрса тăрать.

Саратов, Горький облаçĕсенчи, Мускав çывăхĕнчи, Украинăри чиркÿсене укçан пулăшнă. Нурлатри Илле чиркÿне тăвассишĕн те нумай тăрăшнă. Тайгара пурăнакан Агафья Лыкована та май пур таран пулăшнă. Вăл çын нушинчен пăрăнса иртеймест. Хăй çавăн пек ĕнтĕ. Владивостокра пурăнакан Вениамин Михаил Григорьевич патне унăн ырă ĕçĕсемшĕн тав туса акă мĕн çырса янă: "Турă Сире çирĕп сывлăх патăр. Иртнишĕн ан пăшăрханăр. Эпир вара Сире нихçан та манмăпăр".

Пĕлтĕр çулла вăл Ялавăрта 1924 çулта çунса кайнă чиркÿ вырăнне Хĕрес лартнă. Хăйĕн укçипе. Ырă кăмăллă çынсем пулăшнипе сăрланă, хурăн тата хыр йывăççисем лартнă. Тăмпаран ракатка хăмисем илсе килме машина та тупнă.

Мĕншĕн Хĕрес лартнă тейĕр. Тĕне ĕненекенсен йăлипе ĕлĕк-авал чиркÿсем пулнă сăваплă вырăнта яланах çапла тăваççĕ. Шанăç тата Астăвăм символĕ пек. Çаплах вăл вăрманти уçланкăра тата хирте Хĕрессем лартма ĕмĕтленет - вилнĕ çулçÿренсемпе иртен-çÿренсен чунĕсене çăмăллатма. Михаил Григорьевичăн Ялавăрта та çĕнĕ чиркÿ тăвас ĕмĕчĕ пур.

Чылайăшĕ ăна ăнланмаççĕ. Унăн ĕçĕнче мĕнле те пулин çитменлĕх палăртма тăрăшаççĕ. Анчах та тупаймаççĕ. Иккĕленеççĕ. Пирĕн ăру курайманлăха хăнăхнă, пĕрпĕрне ăмсанатпăр. Çапла майпа, эпир пурнăç çавăн пек пулмалла тесе шутлатпăр.

Михаил Григорьевич шутланă тăрăх, çынсен чĕрисем халь хытнă, пĕрпĕрне хĕрхенмеççĕ, шеллемеççĕ. Ырă ĕçсем сахал, виçеллĕ çеç тăваççĕ. Йÿне те мар. Пĕр стакан шыв пама хĕрхенеççĕ, çурта кĕме те сĕнмеççĕ. Пăрлă картлашка çинче ватă карчăка пулăшса аллисене те памаççĕ. Киревсĕр сăмахсемпе кÿрентерме пултараççĕ. Улталаççĕ, кĕвĕçеççĕ, пĕр-пĕрне ăмсанаççĕ, хăшпĕр чухне вара çын нушишĕн, хуйхишĕн савăнакансем те тупăнаççĕ. Пулăшма хирĕçлеççĕ. Михаил Григорьевич та хĕреспе картана сăрлама ял çыннисенчен сăрă туянма пулăшма ыйтсан çавăн пек çынсене тĕл пулнă. Пĕччене питĕ йывăр. Вăл çаплах вăрçăра вилнĕ ентешсене халалласа лартнă палăка та çĕнетнĕ, сăнчăрпа карта тытнă. Унăн çуртĕнчен те ырă сăмахсемсĕр халиччен никам та тухса кайман-ха.

Хальхи пурнăç çинчен вăл питĕ нумай шухăшлать. Михаил Григорьевич хăйне валли тупăк та хатĕрлесе хунă. Унăн юратнă кĕллисем - "Çÿлти аттемĕр" тата "Çÿлти Турă, савăн". Тĕн çинчен нумай вулать. "Казанские епархиальне ведомости" тата Самарти "Благовест" хаçатсене çĕлесе пырать. Ĕлĕкавалхи тĕп йăласене иккĕшĕ те, мăшăрĕ Надежда Сергеевна та çирĕп пăхăнаççĕ. Унăн мăшăрĕ полячка, питĕ хитре те тараватлăскер.

Ачисене те вĕсем çирĕп йĕркепе ÿстернĕ, анчах та кăшкăрса тата чышкаласа мар. Пачах урăхла, ĕçе юратма, ваттисене хисеплеме, ырă кăмăллă пулма вĕрентсе.

Михаил Григорьевич каланă тăрăх, Аслă типĕ вăхăтĕнче кама та пулин лайăх тăвас тесен, пĕччен пурăнакан ватă тата чухăн çынсем патне каймалла, вĕсене ĕçме-çимепе, тумтирпе е укçапа пулăшмалла. Çурта кĕрсен вара "Лайăх-и, сывă-и" мар, "Ку çуртра тăнăçлăх пултăр" тесе чун-чĕререн ырă сунса каламалла. Ырă та хĕрхенÿллĕ чун-чĕреллĕ Михаил Григорьевич, Сирĕн çуртăрта ĕмĕрĕмĕрех тăнăçлăх тата ыркăмăллăх кăна хуçалантăр.

...Пĕлетĕп, Эсир хăвăр çинчен çыртарасшăн марччĕ. Анчах та манăн вара Сирĕн çинчен çынсене каласа парас килчĕ.

**Т.НАЗАРОВА.**

**Ÿкерчĕкре: Хĕресе çутатнă самант. Ун чухне кунĕ те питĕ çутă та уяр пулнă.**

# Тăван чĕлхе - наци сăпки

Икĕ чĕлхепе пĕр тан усă курни - политика фарсĕ, вырăс чĕлхи малтанхи пекех пĕртен-пĕр патшалăх чĕлхи пулса тăрать тенине пичетре час-часах тĕл пулатăн. Ку сăмахсенче тĕрĕсси те пур ĕнтĕ. Анчах малтанхи, хамăр тăван чĕлхепе калаçма вăтанна вăхăтсемпе хальхисене танлаштарсан, уйрăмлăх пысăк. Çакна эпир хулари 4-мĕш номерлĕ вăтам шкулта тутар чĕлхине халалланă эрнере пулса курсан тата та ĕнентĕмĕр.

Çав кунсенче шкулăн икĕ хутне те кăçалхи юбиляр-çыравçăсемпе поэтсене Гакиль Сагирова, Фанис Яруллина, Гульшат Зайнашевана халалланă стена хаçачĕсем илемлететчĕç. Аслă классенче сочиненисен конкурсне пĕлтернĕччĕ. Эрне хушшинче вунна яхăн мероприяти пулчĕ. Çапла, çамрăк педагог Л.С.Вафина вырăс ачисемпе пĕрле Тукай творчествин каçне ирттерчĕ, тепĕр педагог Г.Н.Мустафина "Джентльмен-шоу" йĕркелерĕ. Çиччĕмĕш класра вĕренекенсем, вырăспа чăваш наци ачисем, тутарла калаçрĕç, юрăсем юрларĕç. Гакиль Сагиров поэта халалланă каç та, Ф.Закиуллин йĕркеленĕскер, ăнăçлă иртрĕ. Пĕрремĕш учитель поэт И.Давлетшин, унăн пиччĕшĕ Насых пичче тухса калаçнине ачасем питĕ тимлесе итлерĕç. Çав кун ачасем Г.Сагировăн сăввисене нумай каларĕç.

Кăçал 90 çул тултарнă Абдулла Алиш творчествине те эрне хушшинче пысăк тимлĕх уйăрчĕç. Опытлă педагог Э.Р.Давлетшина "Халапсен тĕнчинче" каç ирттерчĕ. Икĕ команда пайланнă ачасем çыравçăн халапĕсене инсценировкăларĕç, сăввисене вуларĕç. 1-11-мĕш классенче пуринче те класс сехечĕсем иртрĕç.

Наци, тăван чĕлхе шăпи, малашлăхĕ шкулсенче, шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсенче тăван чĕлхене мĕнле вĕрентнинчен чылай килет. Çакна лайăх ăнланса хулари 4-мĕш номерлĕ вăтам шкул коллективĕ тутар чĕлхин шайне çĕклессишĕн тăрăшать. Кунта ултă çул каялла чи малтан вырăс ачисене тутарла вĕрентме пуçланă. Чылай мероприятисене икĕ чĕлхепе ирттереççĕ. Çĕнĕ çул уявĕсем темиçе çул ĕнтĕ тутар чĕлхипе иртеççĕ. Ашшĕ-амăшĕсем те çакăнпа кăмăллă.

Юлашки çулсенче йывăрлăхсене пăхмасăр тутар класĕсен шучĕ ӳсет. Шкула уçнăранпах пуçламăш классенчи ачасене вĕрентекен Фиалка Вагизовна Мусина пĕр тутар класĕ вĕрентсе кăларнă ĕнтĕ, халь теприне вĕрентет. Розалия Касымовна Валеева, Энже Рафиковна Давлетшина, Гаяз Мингазович Тазиев учительсем хăйсен ĕçне чунне парса ĕçлеççĕ. Вĕсен пӳлĕмĕсене хальхи вăхăтпа килĕшӳллĕн оборудованиленĕ, уроксенче ачасем пысăк активлăх кăтартаççĕ. Вĕсем ачасене шухăшлама, тăван чĕлхене хисеплеме вĕрентеççĕ. Вырăнти поэтессăсемпе Ф.Мухамметовапа, Р.Маслаховапа, республикăри паллă композиторпа Рамиль Мифтаховпа ирттернĕ тĕлпулусем ачасен асĕнче тахçанччен юлĕç. Çавăнпа та çак учительсен вĕренекенĕсем районта ирттерекен мероприятисенче малти вырăнсем йышăннинчен тĕлĕнмелли çук. Тĕслĕхрен, Лейсан Кутузова тутар чĕлхипе литературăн кăçалхи олимпиадинче малти вырăнсенчен пĕрне йышăнчĕ. Çавăн пеккисем вара, тутар чĕлхипе лайăх вĕренес текенсем, шкулта чылай.

**З.АХСАНОВА,**
**КГУ студентки.**

---

Ула́х юррисем

## Шăпăр кăна шăпăр çумăр çăвать

Шăпăр кăна шăпăр çумăр çăвать,
Тип-тикĕс çĕрсене шыв тăвать.
Пире пĕр курайман тăшманĕсем
Ĕмĕр çук сăмаха пур тăваç.
Ĕмĕр çук сăмаха пур тăваç, -
Сар ылтăн пек пуçа хур тăваç.

Шур Атăлтан тытнă шурă пулă
Вырттăр Атăл çинче пăрланса.
Пиреех курайман тăшманĕсен
Ĕмĕрĕсем иртчĕр хурланса.

Çарăмсанăн çырми siksе юхать,
Кам каçакан хывтăр каçмине.
Пире калакансем мĕн каламĕç,
Кам калакан çутăр çылăхне.

Ула хура тытса шыва ятăм
Какаклатса ишсе çӳреме.
Шурă хута тытса эпĕ лартăм
Йĕре-йĕре çыру çырмашкăн.

Акăшсем вĕçеççĕ, ай, малалла,
Çуначĕсем юлаç каялла.
Эпир шухăшлатпăр, ай, малалла,
Ăраскалсем юлаç каялла.

Пухса йĕркеленĕ Е.Илюшкина.

---

## "Нурлатнефтепродукт" акционер обществи акционерсен çулталăкри пĕрлехи пухăвне ирттересси çинчен пĕлтерет.

**Кун йĕркинче:**

1. Çулталăк отчетне, баланса, счетсене, тупăшсемпе тăкаксене çирĕплетесси, тупăшсене вырнаçтарас, 1997 çулхи аудитор пĕтĕмлетĕвне тăвасси.
2. Директорсен советне суйласси.
3. Ревизи комиссине суйласси.
4. 1997 çулшăн дивидендсем тӳлесси çинчен.
5. Общество аудиторĕсене çирĕплетесси.
6. "Татнефтепродукт-Холдинг" акционер обществине пысăклатасси тата "Нурлатнефтепродукт" акционер обществипе пĕрлештересси çинчен концепцие çирĕплетесси.
7. Укçана деноминациленипе обществăн акцийĕсен номиналлă хаклăхĕпе уставной капиталне коррекцилесси çинчен.

Пуху 1998 çулхи мартăн 27-мĕшĕнче 14 сехетре пулать. Адрес: Нурлат хули, "Сельхозтехника" акционер обществин хĕрлĕ кĕтесĕ.

Акционерсене мартăн 27-мĕшĕнче 8 сехетрен регистрацилеме пуçлаççĕ. Регистрациленме паспорт, пухăва хутшăнма ирĕк паракан доверенность пулмалла. Пухăва 1998 çулхи мартăн 3-мĕшĕччен списока кĕртнĕ акционерсем çеç хутшăнма пултараççĕ.

Акционерсем кун йĕрки çинчен пĕлтерекен материалсемпе "Нурлатнефтепродукт" акционер обществинче паллашма пултараççĕ. Адрес: Нурлат хули, Гиматдинов урамĕ, 114, телефон: 5-39-20.

---



## СĔНӰСЕМ, СĔНӰСЕМ...

Пысăках мар япаласене сăрлама сăр нумай кирлĕ мар. Ыттине вара мĕнле упрамалла? Сăр çине çиелтен çӳхе сийпе тип çу е олифа ярсан, вăл темиçе уйăх пăсăлмасть.

x x x

Çĕнĕ киçтĕке усă курма тытăниччен 50-60 минута шыва ярса лартмалла. Шывпа вăл тăртанать, калăпăшĕ ӳсет, çакă киçтĕке юхса тухасран упрать, сăр та лайăхрах сăрланать.

x x x

Çуллă сăрпа сăрланă хыççăн, киçтĕк типсе хытса ан лартăр тесен, ăна ирĕлтерекен шĕвек янă банка ăшне ямалла, çиелтен полиэтилен пакетпа хупласа лайăх çыхса лартмалла.

x x x

Маччана сăрланă чух сăр киçтĕк тăрăх юхаюха анать. Çавăн пек ан пултăр тесен киçтĕк аври çине вĕçĕнчен губка тирсе кĕртмелле. Вăл юхса анакан сăра хăвăртрах сăрăхтарса пухать.

---

# ПĔЛТЕРӰСЕМ



"Сюита" пианино сутăнать. 5-22-03 номерпе 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.

* * *

Заинск хулинчи икĕ пӳлĕмлĕ хваттере Нурлат хулинчи çавăн пеккипех улăштаратпăр. Заинск хулинчи телефон: 2-41-51.

* * *

Приватизациленĕ пĕр пӳлĕмлĕ хваттер (пĕчĕк çемье пурăнмалли, 4,4 тăваткал метр) сутăнать. Адрес: Советская урамĕ, 78-2.

* * *

ВАЗ-2101 автомобиль сутăнать. Кушкă ялĕнчи телефон: 2-26-99.

* * *

Строительство материалĕсен комбиначĕ хăй туса кăларнă продукцие халăха тата организацисене сутать:
- ФБС-3, ФБС-4, ФБС-5, ФБС-6 никĕс блокĕсем;
- тĕрлĕ вăрăмăшлĕ урлавсем (перемычки) 1,5 метртан тытăнса 3,10 метр;
- витмелли тĕрлĕ плитасем;
- керамзит блоксем, 20х20х40 сантиметр пысăкăш;
- пусăункисем, хупăпа.

Уйрăм заказсем йышăнатпăр. Хаксене чакарнă. Укçана тӳрех те, куçарса тӳлеме те пулать. Телефон: 2-10-49.

* * *

0,75 тĕп прокладкăсем (ГАЗ-52) туянатăп е улăштаратăп. Телефон: 2-26-43.

* * *

Лайăх шайри ВАЗ-2104 сутăнать, кузовне 1997 çулта туса кăларнă. Телефон: 2-29-15.

* * *

1995 çулта туса кăларнă лайăх шайри ВАЗ-2106 сутăнать. Телефон: 2-29-15

* * *

Тележкăллă Т-40 трактор сутăнать. Киклĕ ялĕнчи Гайнутдинран ыйтса пĕлмелле.

* * *

1996 çулта туса кăларнă "лагуна" тĕслĕ ВАЗ-21093 автомобиль васкавлă сутăнать, металлик, çапăнман, 32 пин километр çӳренĕ, хаклă мар. Кушкă ялĕнчи телефонсем: 2-24-35 (ĕçри), 2-20-97 (килти).

* * *

Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Московская урамĕ, 5-45, 17 сехет хыççăн пымалла.

* * *

Икĕ камерăллă çĕнĕ "Юрюзань" холодильник сутăнать. Телефон: 5-26-42.

* * *

1996 çулхи декабрь уйăхĕнче туса кăларнă ВАЗ-2107 сутăнать. Телефон: 3-62-41.

* * *

Островский урамĕнчи 41-мĕш çурт сутăнать. Адрес: Тукай урамĕ, 11, телефон: 2-19-83.

---

"Альянс" магазин (апат-çимĕç пасарĕ) тата "Елена" магазин (япала сутакан пасар) тĕрлĕ моделлĕ 1,2,3 камерăллă "Стинол", "Норд" холодильниксем, "Стинол", "Норд", "Минск" сивĕтекен камерăсем сутаççĕ. Тӳлевсĕрех çитерсе паратпăр, гаранти 2 çул, пысăк шанчăклă. Телефон: 5-41-19. Свидетельство Б-621.

НГДУн технологи транспорчĕн "НН" управленийĕнчи административлă çуртĕнче араб графикипе çыруне вĕрентес тĕлĕшпе курссем ирteççĕ. Занятисем тунтикунсенче, юнкунсенче, эрнекунсенче пулаççĕ, 18 сехетрен пуçланаççĕ. Араб чĕлхине вĕренес текенсене чĕнетпĕр.

"Нурлатнефтепродукт" акционер обществи автомашинăсен урапиcен шиномонтаж, вулканизаци, балансировка услугисене сĕнет. Адрес: "Тургай" закусочнăй патĕнчи 19-мĕш АЗС территорийĕ (кивĕ заправка). 9 сехетрен пуçласа 18 сехетчен ĕçлетпĕр.

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хут тухать - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 865.